96
94-ЧУВ

НИКОЛАЙ КУШМАНОВ

# ÇУЛ ПУÇЛАМĂШĔ



Национальная библиотека ЧР
4-033294



ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

100р
К С(чув)
К96

НИКОЛАЙ КУШМАНОВ

# ÇУЛ ПУÇЛАМĂШĔ

**Сăвăсем, поэма**



ИР

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1991

ББК 84 Чув 7-5
К 96

ПРОВЕРЕНО
20 10

**Кушманов Н. К.**
К 96 Çул пуçламăшĕ: Сăвăсем, поэма.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1991.— 40 с.

Кĕнекене мирлĕ пурнăç, тăван тавралăх илемĕ çинчен çырнă сăвăсем кĕнĕ. «Çул пуçламăшĕ» поэмăра Тăван çĕршыв кунçулне сăнланă.

**ББК 84 Чув 7-5**

К $\frac{4803710202-100}{М\ 136\ (03)-91}$ 65—91

ISBN 5-7670-0471-4

33294чув

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1991 ç.

Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького



## ПИРĔН ТĔЛЛЕВ

### ЭПИР — МИР ÇЫННИСЕМ

Эпир — мир çыннисем,
Ăна сыхлакансем.
Юратнă Çĕр-аннен
Упрар-ха канлĕхне!

Мухтатпăр хĕвеле,
Пурнасшăн çĕнĕлле.
Тĕнчен пур халăхне
Чĕнетпĕр мир ретне!

Мула юратакан,
Ăна пуççапакан
Итлесшĕн мар пире,
Юнасшăн çут мире.

Çынпа çын тус-тăван
Пулсан — епле аван!
Телейĕн сăпкине —
Сыхлар Çĕр чăмăрне!

Кашни мире савсан,
Ун хăватне сарсан,
Çитеççĕ ыр кунсем,
Чакаççĕ тăшмансем.

Калатпăр уççăн халь,
Тĕллев те пирĕн çак:
Ирттермĕпĕр ахаль
Пĕртен-пĕр пурнăçа.

Ӳстерĕпĕр куллен
Тырпул та хӳхĕм сад.
Вăрçа çĕнтермелле
Кашни çын кар тăрсан.

Хула та ял калать —
Ĕмĕтленни пулать.
Савать мире ĕçчен
Çĕр чăмăрĕ çинче!

## ТĂВАН ЯЛТА

Хула шăв-шавĕ хыççăн лайăх
Туйса тăма кил ăшшине.
Пĕве хĕрри.
Тем тĕрлĕ кайăк
Шăрантарать, ав, юррине.

Кунта эп туссемпе вылянă
Е чăмпăлтатнă пĕвере.
Хур-кăвакал сасси
Асаннă
Ачалăха асилтерет.

Хĕвелĕ ялăмра ачашшăн
Хĕмне сапать ĕлĕкхиллех.
Тирекĕн çулçисем хавассăн
Çатăлтатаççĕ çилпеле.



✦✦✦

Хӗвелӗн çутинчи çӑлкуçӗ
Чӗркӗмӗллӗн йӑл-ял çиçет.
Ун шывӗ Шлипшура* кӗç куçӗ,
Кайран ӑна Пӑла кӗтет.

Унтан çул тытӗ вӑл тӗллевлӗн
Мӑн Атӑла пӗр чарӑнми...
Çӑлкуçӑм! Манӑн ӗç сан евӗр
Пулинччӗ тетӗп иксӗлми...

## ШКУЛ АЧИСЕН ЮРРИ

Ирпе путене авӑтать-и,
Çил-тӑвӑл урать-и кӑран —
Эпир малаллах çул тытатпӑр,
Çунать çутӑ çӑлтӑр умра.

Ут тӗрӗс çулпа,
Тӑван халӑхпа.
Упра хӑв чысна çамрӑкла.

Эпир тӑрӑшса вӗренетпӗр,
Тӑван çӗршыва юратса.
Ӗçе хӑнӑхса çитӗнетпӗр,
Чунра пысӑк ӗмӗт тытса.

Утатпӑр эпир тус-тӑванлӑ,
Телей пире халӑх пиллет.
Кунçулӑмӑр ирӗк те анлӑ,
Мала васкатать çут тӗллев.

Ут тӗрӗс çулпа,
Тӑван халӑхпа.
Упра хӑв чысна çамрӑкла.

---

* Патӑрьел районӗнчи юханшыв.

## ЫТКĂН-ЫТКĂН, ЙĔЛМЕ ЙĔЛТĔР

Мамăк евĕр вĕлтĕр-вĕлтĕр
Шур юр çурĕ çĕрĕпе...
Ыткăн-ыткăн, йĕлме йĕлтĕр,
Ирхи янкăр уй-хирпе.

Çил ачи манпа çӳресшĕн,
Алхассах чĕрре кĕрет.
Кăлăхах çула пӳлесшĕн,
Вĕт юрпа питрен перет.

Шур пуставлă уй-хир урлă
Икĕ йĕр хыçа юлать.
Йĕлме йĕлтĕр ман хăюллă —
Çилçунат пек ыткăнать!

## ÇУРХИ КĂМĂЛ

Тăри юррилле савнă хирĕм,
Сан сарлака ытамунта
Хама туятăп эпĕ çирĕп,
Çӳретĕп ыррăн эп кунта.

Тӳпе — таса та çутă ирĕк —
Кăвак шевлепеле ялтрать.
Ача пекех ачаш çу ирĕ!
Хĕвел çĕре савса лăпкать.

Мăнаçлă Атăл — çамрăк каччă —
Аякранах вăл курăнать.
Ун умĕнче колхозăн сачĕ
Туй тумĕ — шупăр — тăхăнать.

Тăри юррилле савнă хирĕм,
Сан сарлака ытамунта
Хавхаланатăп каç та ир эп.
Çĕн ĕмĕт çуралать кунта.

## ХЁВЕЛ УРИ

Хаваслӑн хирпеле утатӑп,
Сӑнатӑп эпĕ тӳпене.
Сӑнанӑçемĕн мал енне,
Хĕвел ури унта куратӑп.

Чӑн-чӑн илем! Куçа шартса,
Хĕлхемĕсем çӳлте çиçеççĕ,
Шур пĕлĕт витĕрех анса,
Вӑрман çине çитсе ӳкеççĕ.

Самантлӑх шухӑшсем çухалнӑн
Пытанчĕç çут пайӑркасем.
Тӑратӑп эп, такам тухатнӑн,
Çак илеме татах кĕтсе.

## ТИНĔСЕ

Шавла, шавла пĕр чарӑнмасӑр...
Хумсем, шав чупӑр малалла.
Çак тинĕс пек ман чунӑм харсӑр,
Ялан ун евĕр пулмалла.

Хумхан, хумхан эс аслӑ тинĕс,
Кисрентĕр çыр, ташлатӑр чул.
Этем, кунта лӑпланмӑн тин эс,
Эппин, ыр ĕçшĕн çунтӑр чун!

Шавла эс, тинĕс, чарӑнмасӑр...
Хумсем, хумсем, чĕвен тӑрса,
Тем тĕрлĕ тĕслĕн ялтраса,
Малта сулмаклӑн ыткӑнсамӑр.

Хавхаланатӑп, хумханатӑп,
Сирĕнпеле эп ирĕкре!
Эй, тинĕс! Эсĕ — вӑй-хӑватӑм.
Сан пек пӑлхавлӑ ман чĕре.

✦✦✦

Август уйăхĕ тирпейлĕ,—
Кăмăллать лăпкăлăха.
Сахалрах тăкать хĕвелĕ
Вут-хĕмне тавралăха.

Вăрманта утма пит канлĕ
Çакă ырă вăхăтра.
Шухăш ирĕк, шухăш анлă
Пынă май уçланкăра.

Ăшă. Лăпкăлăх. Анчах та
Çул çинчи сар çулçăсем
Пĕрмаях тĕл пулнăçемĕн
Тунсăха путан вăрах.

✦✦✦

Хумсем, пĕрне-пĕри тĕртсе,
Мала çĕмрен пек ыткăнаççĕ
Е чашкăрса кăпăкланаççĕ,
Хăватлăн, шуххăн çĕкленсе.

Вĕсем ялан мала васкаççĕ,
Кăмăлласа чăрсăрлăха,
Е çырана пырса çапаççĕ
Сивленĕ май лăпкăлăха.

Урса кайсассăн, путараççĕ
Мăн карапа та авăра...
Е тепĕр чух, тӳлек кунра,
Сăпкари пек ярăнтараççĕ.

Çав шух хумсем чуна пит çывăх,
Хĕрӳ шухăшсемпе танах.
Вĕсем сĕнеç: нихçан ан ывăн,
Ялан кĕреш, пул вăйлăрах.

## ЙĔС ШĂНКРАВ КĂНА ЯНРАТĂР...

I Кур-ха, кур-ха, çунасем
Çиçĕм евĕр ыткăнаççĕ.
Шурă çулăм чĕлхисем
Вут кăларнăн явăнаççĕ.

Пĕкĕ, хăмăт эрешленнĕ,
Вĕлкĕшеççĕ хăюсем.
Пичĕ-куçĕ, ав, хĕрелнĕ
Катаччи чупакансен.

Çунасем çине лараççĕ
Каччăсем те сар хĕрсем.
Çĕнĕ юрă янратаççĕ,
Кашниех хавас вĕсем.

Йĕс шăнкравĕ илĕртӳллĕ,
Тикĕс те тӳлек янрать.
Ун кĕвви-çемми чĕнӳллĕ,
Хăй патне вăл йыхăрать.

II Çуркунне çиçет умра:
Çеçкере садсем, çаранлăх.
Телей тупнă мăшăра
Ял çынни курма хаваслă.

Туй кӳмиваскать, васкать,—
Çамрăксен халь çулĕ уçă.
Йĕс шăнкравĕ питĕ уççăн
Кĕмĕл сасăпа янрать.

Ваттине вăл асилтерчĕ
Иртсе кайнă вăхăта.
Яшсене хуллен систерчĕ:
«Пулăр хăвăр та хăта».

Ун сасси чунра вăратĕ
Ырă, çутă туйăмсем.
Шухăшсем капланнăçем
Сĕнĕ: «Пĕр-пĕрне юратăр».

Шăнкăравĕ шăнкăр-шăнкăр...
Хĕр юрри пек янăрать.
Эй, пускил, ташла та шăхăр,
Туй илемĕ савнăçра!

III Тепĕр сăн каймасть умран:
Тутлă ыйхăра ялйышăм.
Чан чĕнет:
«Тухсамăр йышлăн,
Сӳнтерер вут-кăвара!

Çурт çунать.
Хăрушă çулăм
Алхасать. Кӳрет типшар.
Эй, çынсем! Хăюллă пулăр!
Вăй илсех пырать пушар».

Чан сасси епле кĕрлерĕ:
«Тухăр, тухăр пулăшма,
Ырлăх-пурлăха çăлма!
Инкеке йышпа çĕнтерĕр».
Пур кунта вут чĕртекенĕ,
Йăпшăнать вăл хӳтлĕхе.
Пит-куçне кĕççе çĕленĕ,
Ма çаплах-ши иртĕхет?

Чан сасси йыша пухать,
Кашниннех кунта пĕр шухăш:
«Вирт-пушар ан астăр шуххăн».
Çулăм чакнăçем чакать.

IV «Иртнине ан ман тет чан,
Сас-пĕлтерĕшĕм пит анлă.
Хатыньре* янравăм ман.
Бухенвальд** манпа канашлă.

---

* Хатынь — Белоруссири ял. Ăна фашистсем вăрçă вăхăтĕнче пĕр çын юлмиччен тĕппипех çунтарса янă.
** Бухенвальд — Германири концлагерь ячĕ.

Е тата, ав, Хиросима*
Хурлăха асилтерет:
Нихăçан та «кăрăç-çимĕç»
Хĕн ан кӳтĕрччĕ сире.

Тамăкри сассем хăрушшăн
Çӳçентерĕç чĕрене:
Çĕр-сăпка ан юлтăр пушă,
Чечеклентĕр кулленех.

Пĕрлĕх, туслăх кар! çĕкленччĕр,
Сассăма тăнла-тăнла.
Ырă усала çĕнтертĕр,
Пурăнтăр этем çынла.

Манăн шав чăрмавсăр пухтăр
Хăй тавра хастар йыша.
Кунран-кун сивлеклĕх хухтăр,
Пĕттĕр çĕр çинче нуша!»

V Чуншăн çывăх ĕмĕр-ĕмĕр
Йĕс шăнкравăн çут сасси.
Пур унра çунатлă ĕмĕт,
Пысăк шанчăк, пуласси.

Анчах чан та систерет,
Пĕлтерет: синкер пĕтмен-ха.
Кур, ав, инкекре Армени,
Пулăшу пиртен кĕтет.
Йыхăрать те:
«Нимене!»
Çĕкленет çĕршыв, тĕнчемĕр,
Асапа пĕрле çĕнер,
Вăйлă-ха унран этемлĕх.

Чан сасси, шав кĕрлесе,
Чĕрене ан ыраттартăр.
Тултăр ĕмĕчĕ çынсен,—
Йĕс шăнкрав кăна янратăр!

---

* Хиросима — Японири хула. Американецсем 1945-мĕш çулта ун çине атом бомби пăрахнă, унта вуншар пин çын вилнĕ.

## «ÇЕÇПĔЛ» КИНОФИЛЬМРА

«Çĕршывăм хăюллăн вăранĕ...»
Çак шухăш ялан чĕремре.
Чăваш чăннипе халь мухтанĕ,
Ун ячĕ кĕрлет тĕнчере.

Сап-сар тырă хумĕ — тавралăх —
Çăра вăрмансен хӳттинче.
Эс кĕтнĕ, юратнă малашлăх —
Çĕршывăн кашни кунĕнче.

Çур ĕмĕр ăсанчĕ — юлмарăн,
Сăнарăн Чăваш уттине.
Эс килтĕн. Татах шантаратăн
Çĕн КУН çĕнелсе килнине.





## МУЛ — ЭРНЕЛĔХ, ĂС — ЯЛАНЛĂХ

***Ваттисен сăмахĕсем майлă***

✦✦✦

Ваттисен сăмахĕсем —
Ăслă, тарăн хайлавсем.
Вĕрентеççĕ пурăнма,
Ырă ĕçшĕн кар тăма.

✦✦✦

Кашнин шăпи хăйне кура,
Кашни шанать çут çăлтăра.
Тĕл пулмасан хура-шура,
Телей тупан-ши пурнăçра?

✦✦✦

Такăнмасăр ӳкес мар,
Ватăлмасăр вилес мар.
Кирлĕ-кирлĕ маршăнах
Кĕрес çук чĕрре ăсчах.

***

Нуша тӗревлӗ
Тата ӗрчевлӗ.
Унпа этемӗн
Хухать илемӗ.

***

«Ирпе ан кул, каҫпа йӗретӗн», —
Ҫапла калатчӗ ман анне.
Ача чух темшӗн ӗненеттӗм
Ҫак сӑмахсен пӗлтерӗшне.

***

Кӳлӗ шывӗ пӑтрансан та,
Вӑхӑт ҫитӗ — тӑрӑлать.
Ыр ҫын чунӗ — ҫутӑ кантӑк,
Варлансан та тасалать.

***

Инкек ҫине синкек,
Нуша вӑл — тикенек.
Сирес тесен хӗне,
Тусна ҫеҫ ан хӗне.

***

Ҫыхман милӗк саланать,
Хуҫи ӳрӗкрех пулсан.
Ҫирӗп туслӑх сыхланать,
Пӗр-пӗриншӗн кар тӑрсан.

***

Сар хӗвелӗ нихҫан та
Ҫутатмасть пӗр ҫыншӑн ҫеҫ.
Вӑл пиллет пурне те шанчӑк,
Вилӗмсӗр унпа тӗнче.

***

Пурнас текен пурнайман,
Вилес текен вилеймен.

Пуш сӑмах ҫапма нихҫан
Ваттисем пире хушман.

✦✦✦

Телее шансан та
Асра тыт ялан:
Пурнӑҫ пулмӗ янтӑ,
Эс ҫакна ан ман.

✦✦✦

Тӳр сӑмах каланипех
Тӳрленессе шанма хӗн.
Кашкӑра темтепӗр сӗн:
Вӑл пӑхать вӑрман еннех.

✦✦✦

Пере пӗлмен ал туйи
Пырса тивнӗ, тет, хӑйнех.
Улталаканӑн суйи
Шӑтса тухать ҫийӗнчех.

✦✦✦

Ҫӗнӗ тус тупсассӑн,
Киввине, юлташ, ан ман.
Пит каппайлансассӑн,
Нимсӗрех тӑрса юлан.

✦✦✦

Кайӑк, тӳпере вӗҫсен те,
Таврӑнать хӑй йӑвинех.
Ҫулҫӳрен, таҫта ҫитсен те,
Асилет тӑван килнех.

✦✦✦

Сӑрӑ тӗсшӗн кӑна мар
Хӗсӗрлеҫҫӗ кашкӑра.
Вӑл тӑшман тупать пӗрмай,
Хӑй пит ҫӑткӑн пулнӑран.



Чувашская
Республиканская
БИБЛ… ЕКА
им. М. Горького

33294 гув

✦✦✦

Халăхпа пĕрле пулсан,
Халу чакмĕ нихăçан.
Унран уйрăлса кайсан,
Хӳтлĕхсĕр тăрса юлан.

✦✦✦

«Чĕлхен шăмми çук»,—тесе
Пĕр сăлтавсăр каламан.
Усăсăр сӳпĕлтетсен,
Кăмăл хуçăлать ялан.

✦✦✦

Пурнăç çулĕ — аслă çул,
Айккинче тăрса ан юл.
Шух чĕрӳ хĕрӳллĕн çунтăр,
Тусусемшĕн усă пултăр.

✦✦✦

Улма-йывăç çимĕçĕ
Ӳкмĕ вуллинчен инçе.
Ĕçченсен ачи-пăчийĕ
Пулĕ хăйсем пек ĕçчен.

✦✦✦

Пĕр хĕлхемпе ял çунать,
Сив сăмахпа çын пĕтет.
Ăшă, çутă ĕмĕте
Сыхлама пĕлес пулать.

✦✦✦

Куçупа курмасăрах
Çăварна ытла ан кар.
Пысăк йăнăш тăвасран
Вăхăтра хăвна ху чар.

✦✦✦

Ĕшенсен, шăрăхра
Шыв чуна кантарать.

Ăш сăмах хурлăхра
Вăй парать, пулăшать.

✦✦✦

Çил арманĕ эс лартаймăн,
Çилленсе кайсан, пĕччен.
Тусунта тупсассăн айăп,
Алă пар çын сисиччен.

✦✦✦

Кахал çын кирек хăçан
Ăс памашкăн пит хатар.
Ĕçлеме хăй пуçăнсан,
Чĕмсĕрри унран хастар.

✦✦✦

Ăш сăмах та, сив сăмах та
Пĕр çăвартанах тухать.
Хурлама та, ăнланма та
Вăхăтра пĕлес пулать.

✦✦✦

Нумай итле, сахал калаç,
Хĕрсе кайсан — пĕл чарăнма.
Çынна, асту, сăмахпала
Пулать чĕртме е амантма.

✦✦✦

Сивĕ çилĕ лăскасан,
Йывăç пĕччен чух тӳнет.
Вăхăтра пулăшмасан,
Çын кунçулĕ час сӳнет.

✦✦✦

Çине тăрсан та, эс ăнлан:
Уйри çиле тытаймăн.
Ялан пуш параппан çапсан,
Çут ĕмĕте кураймăн.

***

Кам тăрăшарах ĕçлет,
Çавă ытларах илет.
Урăхла та пулкалать,
Ултавпа тепри пуять.

***

Кирек кам та йăнăшать,
Тӳрĕ çын та такăнать.
Япăххи те, лайăххи те
Сăмахран илеççĕ витĕм.

***

«Ыльăм, усалпа туслашиччен
Ăслă çын ури вĕçне вырт, теççĕ», —
Вĕрентетчĕ ăшшăн ыр аттеçĕм,
Эп ăна манмастăп паянччен.

***

Сарлака саккун сакки:
Пур йӳççи ун, пур пахи.
Пур тата пĕр лайăх ен —
Улшăнать вăл майĕпен.

***

Мул — эрнелĕх,
Ăс — яланлăх,
Хак — пĕр енлĕ,
Ĕмĕт — анлă.

***

Пуçа килнĕ шухăшна
Ан васка персе яма.
Сивĕтме ансат тусна,
Кансĕр çĕн юлташ тупма.

***

Кирлĕ мар çĕр сум укçа:
Паян — пур, пĕтет — ыран.

Чи хакли — çĕр тус пулсан,
Аптрамастăн нихăçан.

Çӳресен — çул уçăлать,
Ӳркенсессĕн — хупăнать.
Ăс пухсам эппин хуллен,
Пурнăç улшăнĕ куллен.

Çухатсан аçун чысне,
Хăвăнне те эс упраймăн.
Варласан чăваш ятне,
Халăхун сумне чакарăн.

Ăслă çынпа калаççан,
Пыл хыпатăн çăвара.
Ухмахпала туслашсан,
Пулăн тертре, нушара.

Ваттисем каланине
Ачаран хывсан ăша,
Тăнласан вĕсен пилне,
Пăрăнать санран нуша.





## ÇУЛ ПУÇЛАМĂШĔ

***Поэма***

*Эпир Российăра пурнатпăр.*

*П. Хусанкай*

Русь çĕрĕ...
Çуталса выртать тӳлеккĕн,
Çĕнелӳре кунран-кун вăй илет.
Хĕрӳ ĕçре ӳссе пырать тĕрекĕ,
Мал ĕмĕтпе çунатланса çиçет.

Русь çĕрĕ...
Ик çăмах кăна.
Пĕлтерĕш
Вышкайсăр пысăк, çук тек ун пекки.
Историйĕ пурне те хĕмлентерĕ,
Кăсăклатса тăрать кашни йĕрки.

Октябрь праçникĕ çуллен çитӳçĕн
Пулни-иртни тухма пĕлмест асран.
Çĕннин пуçламăшĕ — Раççей-ертӳçĕ —
Çĕршыв шăпи, пуласлăхĕ унра!

Русь çĕрĕ...
Уй-хирпе пĕччен пыруçăн
Шухăшăмпа йĕрлетĕп кунçулна.
Туятăп, ак, сассем янраççă уççăн,
Вĕсем шуйхантараççĕ ман чуна.

Çав сасăсем, шур хут çине куçса,
Хĕрӳ туйăмсене çивĕчлетеççĕ.
Хумхантараççĕ кăмăла, ăса,
Кĕрлевлĕ çул-йĕрне асилтереççĕ.

Сана хурлакансем те тупăнаççĕ:
Илтетпĕр ыр сунман ют сассене.
Вĕсем сана час-час усал сунаççĕ,
Хирĕçтерме пăхса халăхсене.

Килсессĕн йывăрлăх — вĕсем хаваслă.
Пулмасть ансат, хăй тĕллĕн Çĕнелӳ.
Анчах — çĕнтерĕ халăх. Вăл хăватлă.
Çĕршывăм, ĕмĕр çунĕ хĕвелӳ!

## УМĔН КАЛАНИ

Асаттесем кивелнĕ пӳртсенче
Е хулари кичем бараксенче
Кĕрхи каçсем пек кунсенче çуралнă.
Мĕн ачаран курмасăрах ăшпиллĕх,
Кĕлмĕçленсе пуяншăн авнă пилĕк
Чун-чĕмĕ таранах пулса чураллă.

Мул хуçисем иртĕхнĕрен куллен,
Вĕсемшĕн сар хĕвел шевли çиçмен.
Йĕри-тавра сехмет çеç хуçаланнă.
Юн шыв пек юхнă.
Путсĕр саламачĕ
Ши! шăхăрса çара пĕве хутлатнă,
Çулсеренех йышланнă касамачĕ.

Ана çинче тырпул ăнман час-час,
Чӳк-кĕлĕсем те пулăшман пачах.

Чухӑнлӑхра темле йӳнеҫтерсен те
Ялан, ялан пуш-пушӑ пулнӑ енчӗк.
Хуҫалӑх юхӑнсассӑн ыйткаланӑ,
Вара хуланалла йышпа танкканӑ.

Хуҫа лӗх-лӗх кулса та иртӗхсе,
Ҫын тарӗпе услам тӑвас тесе
Ӗҫе илсен, хур кӳнӗ пӗр сӑлтавсӑр.
Кирек хӑҫан юп курнӑ хӑй тӑрлавсӑр.
Хура каҫсем пек шӑппӑн шунӑ вӑхӑт,
Ӑҫта ан пӑх эс: мулҫӑ — ҫӑткӑн, сӑхӑ.

Йӑх-несӗлсем сӳнми ӑс-хакӑлпа,
Нихҫан та ӳркенмен ик алӑпа
Заводсенче шӑратнӑ тимӗр, хурҫӑ.
Фабриксенче куллен-кун тӗртнӗ пурҫӑн,—
Пуян валли мӗн кирлине йӑлт тунӑ,
Анчах пулман хӑйсем ҫеҫ питӗ, тутӑ.

Буржуйӑн пит капмар заводӗнче,
Сивлек те пит вӗри цехӗсенче
Пурнас кунсен-ҫулсен йӗрне кӗскетнӗ.
Ӗҫ хыҫҫӑн та бараксенче тертленнӗ,
Выҫлӑхпала аптранӑ, ыйтнӑ: «Ҫӑкӑр!
Сив вилӗмрен, тархасшӑн, ҫӑлӑр! Ҫӑлӑр!»

Вӗсем куллен йӗрсе йӑлӑннине,
Ватти-вӗттин, чӑлахӑн куҫҫульне
Патша тӳри-шариййӗ курмӑш пулнӑ.
Чухӑнсенчен кирек хӑҫан та кулнӑ.
Тӗллевсӗр йӑлтӑртатнӑ пушӑ ӗмӗт,
Ҫапла ӑсаннӑ ӗмӗр хыҫҫӑн ӗмӗр.

✦✦✦

Русь ҫӗрӗ...
Пур-и сан хитре пуласлӑх?
Йӗри-тавра куҫҫуль те юн тумлать.
Чӑваш ҫыннин, ав, киремечӗ аслӑ,—
Чир-чӗр, асап унпа хуҫаланать.



Юмахсенче кăна-çке ытлăх-çитлĕх,
Юмахсенче кăна — тулли тивлет.
Чăн пурнăçра кирек ăçта та читлĕх,
Чăн пурнăçра тӳрпилĕк иртĕхет...

## ПĔРРЕМĔШ ÇАВРĂМ

Вунтăххăрмĕш, пит пăлхануллă ĕмĕр,
Ĕççыннине ниме хуман çулсем.
Пĕлменнине уçан ăс-хакăл, ĕмĕт,
Ик класс пĕрмай кĕрешнĕ тапхăрсем...

Рабочин тарăхуллă сăн-сăпачĕ,
Çӳле çĕкленнĕ шăнăр аласем...
Пуçпулнисен куллен ӳсен хăвачĕ,
Тата вĕсен тискер доктринисем:

«Кĕлмĕçсене ĕçпе, вăйпа хĕстер,
Чуран ан пултăр юп курмашкăн тивĕç.
Улпут, буржуй, ыр кур ĕмĕрӳнте,
Сан кунçулу чăрмавсăр ирттĕр, тикĕс...»

Çапах та пурĕпĕр çывхарнă шуçăм —
Ĕненнĕ ыррине хула та ял.
Тин палăрнă çул-йĕр тĕллевĕ уççăн:
«Пĕртанлăхра кăна телей, вăй-хал!»

Янранă: «Ĕççыннисем, пĕрлешĕр!
Хресчен, рабочи, пĕр ялав айне!
Телейлĕ пурнăçшăн пĕрле кĕрешĕр,
Кăтартăр аллăрсен мускул вăйне!»

✦✦✦

Малтан чылайăшĕн măка ăс-халĕ
Шанать-ха патшана чунтан-вартан.
Ун çутă керменневаскать ĕçхалăх:
«Патшамăр, тамăкран пире хăтар!»

Çав кун историшĕн халь паллă питĕ:
Кăрлачăн тăххăрмĕшĕ.
Петербург.
Тумтирсене таса, вĕри юн витнĕ.
Пиншерĕн вилнĕ.
Пурте курнă хур.

Вăй илнĕ курайманлăх-вĕчĕ:
«Патша — палач!
Вăл пирĕншĕн çич ют!
Ĕçхалăхĕ, ху çулупа çеç ут!»
Хула та ял пăлханнă шиксĕр вĕçĕм.

Пĕрремĕш революци кĕç хăватлăн
Чăваш çĕрне те васкаса çитет.
Кĕç пăлханать ват Шупашкар, Улатăр,
Хресченĕ пусмăрçа тытса силлет.

«Çитет чăтса!
Памастпăр хырçă-марçă! —
Чемей тăрăхĕнче янрану сас.—
Тӳре-шара пĕлмест, чăн, намăса,
Пулмастпăр яланах вĕсемшĕн тарçă!»

Ертӳçĕ Морев сăмахне тăнлană,
Хĕрӳ калаçăвне ăша хывса.
«Çын пек пурнасчĕ» тенĕ çутă шанăç,
Хавхалантарнă хресчене часах.

Анчах вăйсем тан мар,
Мĕнех эс тăвăн
Алра сан çук пулсассăн хĕçпăшал?
Çапах иртмен-ха кăлăхах çав тăвăл,
Каярахпа курсассăн та типшар.

Сăнчăрласа чылайăшне ăсатнă
Сив Çурçĕре е Çĕпĕр тайгине.
Асаттесем, темле хĕн-хур курсан та,
Куллен-кун шаннă пĕрлĕхĕн вăйне.

✦✦✦

Русь çĕрĕ...
Сарлака.
Мĕнех-ха калăн —
Вĕçĕ-хĕррисĕр вăрмансем, хирсем.
Телейсĕр пурăнать çĕр тĕрлĕ халăх.
Ăçта ан пăх: тавралăх пит кичем.

«Раççей вăл — Сфинкс *.
Чунне нихçан пĕлеймĕн...»
Сăх тăшмансемшĕн ĕмĕр-ĕмĕр ют.
Ун ирĕкне никам та пĕтерейме,—
Хăйне хăй хўтĕлет миçемĕш хут?

Русь çĕрĕ...
Курăнса выртать мăнаçлăн,
Керменсемпе, касаматпа пуян.
Русь çĕрĕ...
Вăл, чăнах та, питĕ аслă,
Анчах та юп курать мул пухакан.

## ИККĔМĔШ ÇАВРĂМ

Тар тăкнă çав-çавах тўрпилĕксемшĕн
Хыт анасем çинче, заводсенче.
Ильич вĕрентнĕ кĕрешме телейшĕн:
«Кам чăнлăхшăн — ан юлтăр айккинче!

Тĕнче вăрçи кĕрлет-ха урăм-сурăм,
Ăна пула ураççĕ пуянсем.
«Кĕрешмелле! — тет Ленин.— Çул çук урăх!»
Истори асĕнче манми çулсем.

Юр витнĕ ялсенче, хуласенче
Пĕр чарăнмасăр пăлханать ĕçхалăх.

---

* Сфинкс — юмахри чĕрчун, çурма арăслан. Кунта «вăрттăнлăх» пĕлтерĕшпе усă курнă.

Малашлăх çулĕ янкăр уçă, паллă,—
Патша тронне аркатнă юлмиччен.

Ик власть хуçалансан та, çивĕч сисĕм
Йышăнтарнах Ильич вĕрентнине:
Апрель тезисĕсем — аçа та çиçĕм —
Чăл-пар салатнă ĕмĕр ултавне.

Хăмач ялавĕ варкăшать чĕнӳллĕн:
«Юлташăм, тăр, пĕрлеш пĕр чăмăра!»
Умри тĕллев тĕтресĕр, çĕкленӳллĕ:
«Буржуй! Çитет!
Тек пулмăн çăтмахра!»

Кумать сив çилĕ чăрсăррăн ир-каçăн,
Нева шывне шап-шур кăпăклатса,
Çĕн эра тапхăрĕ çитет васкавлăн
Улăштармашкăн пăнтăхнă влаçа.

Октябрь кунĕсем çуталĕç, тусăм,
Çулсем иртсен те каяс çук асран:
«Аврора» залпĕпе ялтрать, ав, шуçăм,
Матрос, салтак чупса иртет умран.

Ăçта ан пăх: хăмач та халăх, халăх
Çурхи ейӳ пек сарăлнă кунта.
Историе уçать вăл çĕнĕ алăк.
Илтет вăл халь:
«Çынсем, эсир пĕр тан!»

«Влаçа — Советсене!» — плакат хистенĕ,
«Вăхăтлисем* тĕп пулччăр яланах!»
Буржуйсене Октябрьте çĕнтернĕ,
Тин çитнĕ эпĕр кĕтнĕ самана.

Пĕрремĕш декретсем...
Ал пуснă Ленин:
«Çĕр — хресчене!

---

* «Вăхăтлисем» — 1917 çулхи Вăхăтлăх правительстви.

Мир — пĕтĕм халăха!»
Этем çакна курасшăн ĕмĕтленнĕ,
Юн тăкнă миçе ĕмĕр кăлăхах?

✦✦✦

Русь çĕрĕ...
Мамăк юрĕ вĕлтĕр-вĕлтĕр
Йĕри-тавра пустав сарсан хитре
Е улмуççи уртсассăн шурă чĕнтĕр,
Çут тунсăхпа тулать хĕрӳ чĕре.

Радищевпа Тургенев,
Пушкин çĕрĕ,
Пуç янисен пит хурлă юррисем.
Çил шавĕнче кашнин сăнарĕ чĕрĕ...
Тухаççĕ куç умне кив ĕмĕрсем.

Вулкан пекех тапса тăран хăвачĕ
Пĕр иксĕлми çынсен те Çĕр-аннен.
Малашлăха пĕрле утсассăн тачă,
Терт-нушана çĕнме пулать куллен.

## ВИÇÇĔМĔШ ÇАВРĂМ

Тавралăх урăм-сурăм тăвăл хыççăн
Кал-кал сывлать, çитсессĕн кĕтнĕ мир.
Анчах интервентсем пит çăткăн, выçă —
Пĕр çапăçмасăр парăнман-ха ир.

Антантăн сĕмсĕр вăйĕсем каварлăн:
«Советсене тăватпăр,— теç,— чура».
Ĕççыннинче вĕрет сӳнми хаярлăх
Ирĕклĕхе тăшман таптанăран.

Ильич вĕрентнĕ: «Ирĕк курнă халăх
Хăй шăпипе ĕмĕрлĕхех хуçа.

Çул-йĕрĕ унăн çĕнтерӳллĕ, паллă,
Çич ютсене вăл парăнмасть нихçан».

Вĕсемпеле тĕл пулнă куçа-куçăн,
Пуçланă çапăçмашкăн вăйлăрах.
Кăлкан çеçенхирте, сĕм тайгара
Çывхарнă хăвăрт çĕнтерӳллĕ шуçăм.

Легендăри Чапаев — харсăр кăйкăр —
Çунтарнă тăшмана вут-çиçĕмле:
«Юлташăмсем! Нихçан чакма ан хăйăр,
Чакма халь тивĕç çук — çĕнтермелле!»

Ун чапĕ çулран-çул кĕрлет мăнаçлăн,
Пире çак ят пит çывăх ачаран.
Чăваш çыннин сăлтав пур мухтанмашкăн
Будайкăра çут кун вăл курнăран...

Интервентсен кĕç путланать сăх ĕмĕт:
Вĕсен пĕр çул çеç — чакнă каялла.
Вĕлкĕшекен хăмач ялавĕн хĕмĕ
Вут-çулăм витĕр чĕннĕ малалла!

Умра ялсем те хуласем кĕлленнĕ,
Тăшман типшар кăтартнă çынсене.
Асаттесем, темле хĕн-хур тӳссен те,
Тасатнă вĕсенчен Совет çĕрне.

✦✦✦

Русь çĕрĕ...
Тĕлĕрен каçхи тӳремлĕх,
Сар уйăх çутинче çиçен çаран.
Ирĕкре чух сăнарĕ ун илемлĕ,
Асамлăн курăнать кашни самант.

Русь çĕрĕ...
Ун сăнарĕ уçă, çывăх:
Кăлкан, çеçенхирсем, кăтра вăрман.
Кирек хăçан та пулнă сыхă, сывă —
Хальччен вăл никама та пуççапман.

Русь çĕрĕ...
Пурăнсан та тĕрлĕ халăх,
Кашнийĕн чунĕнче пĕр ĕненӳ:
«Мухтавлă Ленинпа утар вăй-халлăн...»
Тымар ярать куллен-кун çĕнелӳ.

## ТĂВАТТĂМĔШ ÇАВРĂМ

Ильичăн халалне асра тытса,
Кив самана часрах çĕнелтĕр тенĕ.
Ун сăмахне çынсем ялан ĕненнĕ,
Юрра-сăвва кĕртсе, сума суса.

Турксиб,
Кузбасс,
Магнитострой çĕкленнĕ
Сарса чăн-чăн индустри шăв-шавне.
Урăхланать кĕç пурнăçĕ хресченĕн
Пĕтернĕрен пĕчченлĕх йăранне.

Яшсем, хĕрсем ушкăнпала васканă
Палăртнине пурнăçласах тесе.
Пушхирсене шыв панă, нефть уçланă,
Сив тайгара çĕкленĕ хуласем.

Чĕрчун ури пусман çĕрте сад чĕртнĕ,
Çĕршывăм улăпла вăйне сарать.
Çынсем, çынсем епле маттур та чĕрĕ,
Мĕн чухлĕ ырă ен ăмăртура!

Çак ăмăрту ăшши пит çывăхлатнă
Совет Союзĕнчи халăхсене.
Сӳнми тĕллевĕ вĕçĕм хавхалатнă
Пĕр килтерсе чунри ĕмĕтсене.

Мăн Атăл хĕрринчи Чăваш çĕршывĕ
Асаплăн йынăшмасть ĕлĕкхилле.
Çуллен-çул ӳстерет пиншер хĕр-ывăл,
Вĕсен пурин те тин тулли тивлет.

Вуншар завод та фабрика мăнаçлăн
Ĕç кĕввипе кĕрлеççĕ каç та ир.
Хресчен, рабочи, курăр, пĕр канашлă:
«Çурма çулта чарăнас çук эпир».

Республика ятне çĕршывĕпех янратрĕ,
Ĕçлерĕ Чăвашьен хавхаланса.
Ун кăкăрĕ çинче Ильич сăнарĕ —
Пĕрремĕш орден çиçнĕ ялтраса.

Çак ӳсĕмре пиншер çынсен мухтавĕ,
Унта атте-анне тӳпи те пур.
Çак ӳсĕмре юратнă халăх тавĕ:
«Çĕршыв пуласлăхне мала эс хур!»

Анчах та хаклă, çамрăк вулаканăм,
Умри çул-йĕр пĕр йăнăшсăр пулман.
Кам урăхла шутланă — çав пăчланнă.
Çăхав хутне çыракансем пуртан.

Вăтам хресчен, илтсе кулак ятне,
Кĕтмен çĕртен сăлтавсăрах шар тӳснĕ.
Е теприсен каллех утмашкăн тивнĕ
Яш чух ирттернĕ Çĕпĕр çĕршывнех.

НКВДрисем хĕрсех ширанă
Таса шывра та «халăх тăшманне».
«Çулпуçĕ», «аслă» Сталин хушнине
Хамелеон* пулса тӳрре кăларнă.

Çапах ĕненĕве çынсем упранă,
Шанса тăрса тĕтресĕр кунçула.
Тĕнчийĕ айăн-çийĕн пăтрансан та,
Вăл кайнă пурпĕрех малтан мала.

---

* Хамелеон — тĕсне улăштаракан калта.

***

Русь çĕрĕ...
Уй-хирсен тӳлек илемĕ
Тин савăнтарнă хресчене ĕçре.
Ун сăн-питне телей шевли иленнĕ,
Ĕлĕкхилле вăл тертленмен хĕнре.

Русь çĕрĕ...
Сар хĕвел сăрланăçемĕн
Куç виçейми тырпулăн пуссине,
Тăнла-ха: илтĕнет, ав, кĕвĕ-çемĕ,
Кашни савать чунтан мир çул-йĕрне.

Русь çĕрĕ...
Кур: ĕмĕтленни тин çитнĕ.
Ĕçле, вĕрен, хăв телейне ху туп!
Кам ӳркенмест, ун пурнăç ытлă-çитлĕ,
Ан пултăр çеç сехмет те ырату!

## ПИЛЛĔКМĔШ ÇАВРĂМ

Аттемĕрсем тăван çĕре çĕнетнĕ,
Упранă халăхсен пĕртанлăхне.
Тĕттĕмлĕхе яланлăхах пĕтернĕ,
Кар тăнă çутă миршĕн кулленех.

Анчах хура çĕлен эшкерĕ выççăн
Этемлĕхе шутлать чура тума.
Испанире кĕлленнĕ умлăн-хыçлăн
Хула та ял.
Вăйсем пĕр тан пулман.

Хăй ирĕкне вуншар çĕршыв çухатнă,
Фашист пуçпулнă Парижра, Римра.
Ăçта пулсан та ирсĕррĕн вăл татнă
Çын кунçулне.
Пиншерĕн — тамăкра.

Нихҫанхинчен те пурпӗр ҫирӗп шанчӑк:
«Шалчи тулать ҫынҫиенсен кӗҫех!
Нумай асаймӗ выҫӑ куҫлӑ анчӑк,
Кам хӗҫпеле килет, пӗтет хӗҫпех!»

Фашист атти таптанӑран синкерлӗх
Европӑна хупӑрласа илет.
Ӑҫта вӗсем — унта асаплӑх, тертлӗх,
Ӑҫта вӗсем — унта кунҫул сӳнет.

Мӗн чул ҫемье хӑй телейне ҫухатнӑ?
Ишӗлчӗкре кӗлленнӗ ял-хула.
Тӑшман мӗн чухлӗ пурлӑха ҫаратнӑ,
Яшсен ҫӳҫ кӗмӗлленнӗ ҫамрӑклах.

Ҫын ҫиллипе ӳсет куллен-кун вӗчӗ:
«Пит ан васка уяв тума, тӑшман».
Хӑюллӑ халӑхра — ҫӗршывӑн хӗҫӗ —
Чӗнӳ янрать ак хыттӑн:
«Кам — кама!»

Сӑваплӑ вут-вӑрҫа тухать ӗҫхалӑх
Ҫӗр-аннене хӑюллӑн сыхлама.
Юмахри пек куллен ӳсет вӑй-халӗ,
Ҫӗлен йӑхне пуҫлать вӑл аркатма.

«Фашист, хуҫаланаймӑн нихӑҫан та! —
Совет ҫынни тупа туса калать.—
Мӗнпур ҫӗре туртса илме сӑхлантӑн,
Ик-виҫӗ аршӑн уйӑрма пулать...

Хӑв савнӑ йывӑҫран пулать хӗресӗ,
Ват хурӑнсем чылай Раҫҫейӑмра.
Пиртен нимех те тек илеймӗн эсӗ,
Ҫакна, ҫӑхан чун, тыт ялан асра!..»

Мӗн чул геройӑн чыслӑ хушамачӗ
Кӗрлет ҫӗршывӑмра, ҫут тӗнчере.
Чӑваш ҫыннийӗсен те сумлӑ ячӗ,
Ыттисемпе вӗсем те хисепре.

Сарсков колхозник парнине-и манăн!
Туяннă самолет хăй укçипе:
«Федот Орлов! Сăмахăм çак çеç манăн —
Чăваш çĕрне килсем çĕнтерӳпе!..»

Тăвата çул кĕрленĕ вăрçă-харçă.
Тăвата çул шинель хывман салтак.
Фашист пире тăвасшăн пулнă тарçă,
Çак ĕмĕт-хăмпă çурăлнă йăлтах.

Рейхстаг вутра — çав кирлĕ!
Гитлер кăннă
Йыттипеле пĕрле пĕр шăтăкрах.
Хăй ĕмĕтленнĕ пек ун пурнăç «ăннă»,
Юлашкинчен вăл тупнă чăн «çăтмах».

Çĕршыв чĕри — Мускав — тĕнче илтмелĕх
Çĕнтерĕве чыслать кĕç салютпа.
Хĕл кунĕ хыççăн çутă Май хĕвелĕ
Чĕресене лăпкать ăш кăмăлпа.

Кашни калать:
Сыв пултăр паттăр халăх!
Этемлĕхе çăлакана мухтав!
Хăй ăс-халне татах та сартăр анлăн,
Ăна сӳнми телейшĕн ĕмĕр тав!

✦✦✦

Русь çĕрĕ...
Ăш çилпе чӳхеннĕçем
Куçне уçаççĕ чечексем садра.
Европăра пăшал сасси илтместĕн,
Мир юррисем янраççĕ таврара.

Раççей хирĕсенче ака пуçланчĕ!
Кĕр кĕрлесе çунмаççĕ халь танксем.
Салтак арăмĕсем çеç пит хурланчăк,
кĕтеççĕ:
«Килĕç-ши упăшкасем?»

Раççей хирĕсенче ака пуçланчĕ!
Шайлашрĕç окопсем тӳремлĕхпе.
Кăтра вăрман татах та туратланчĕ,
Мăнаçланса сип-симĕс тумĕпе.

## УЛТТĂМĔШ ÇАВРĂМ

Европăра пĕтсессĕн вăрçă вучĕ,
Тин айăпланă кашкăрсен йăхне.
Пĕр шухăшлă этемлĕхĕн чăн сучĕ:
«Чылайăш тивĕç вилĕм майкăчне!»

Ун чух çĕршывăмăр калать пит хыттăн:
«Кам вутпала вылять — çунать вутрах!
Ман çĕр пĕр пусăм та пулмасть çич ютшăн,
Çакна, сăх чун, ан ман, тытсам асрах».

«Чуралăх пĕттĕр! — тет хăюллăн Ази
Терт мăшкăлне курайманран чунтан.—
Хĕвеллĕ кун нихçан тек пулмĕ каç пек,
Ирĕклĕхпе хуçа эп паянтан!»

Колонисем арканчĕç умлăн-хыçлăн
Африкăри мĕнпур çĕршывсенче.
Совет çынни сĕнет пурне те ырлăх,
Явап тытса пуласлăх умĕнче.

Çĕр чăмăрĕ тавра туссем йышланчĕç,
Ĕлĕкхи пек эпир халь пĕччен мар.
Мускав тĕнче илтмелĕх сасă пачĕ:
«Мире савса, тус-тăванла пурнар!»

Хĕвел куллилле космонавт Гагарин
Байконурта:
«Ну, кайрăмăр!» — тени
Пире пурсăмăра хавхалантарнă,
Çут савнăç çиçнĕ сăн-питре кашнин.

Кайран Титов пĕр талăк вĕçрĕ — лайăх!
Савать те мухтанать çĕршыв унпа.

Кӗҫ космоса хӑпарчӗ Николаев,
Чӑваш ачи калаҫрӗ уйӑхпа.

Ҫакна, чӑнах, ӗненӗ-ши аслашшӗ,
Енчен те чӗрӗлсе тӑрас пулсан?
Мӑнукӗ унӑн тӳпепе туслашнӑ,
Вӗҫет хӑюллӑн ҫӑлтӑрсем таран.

Араскалне, сиссем, Октябрь панӑ,
Эппин, юн юхтарни сая кайман.
Телейлӗ самана унпа пуҫланнӑ,
Ҫакна, туссем, асра тытар ялан.

Шӑп ҫавӑнпа шанать мӗнпур ӗҫхалӑх,
Планетӑмӑр пире шанса тӑрать:
«Тавах, совет ҫынни вӑй-халлӑ халӗ,
Унпа усаллӑха ҫӗнме пулать».

Чуралӑха тӗпрен кӑкларӗ Куба,
Хастар Вьетнам ҫӗнтерчӗ ирсӗре:
Киревсӗрсемшӗн алӑк пирӗн хупӑ,
Саватпӑр эпӗр ирӗке, мире!

Ҫапла утатпӑр туслӑн алла-аллӑн,
Кам чӑнлӑхшӑн — вӑл ӗмӗр пирӗнпе.
Ҫулсеренех эпир хавас-хаваллӑ
Хӗвел ҫутиллӗ халӑх ӑсӗпе.

## ЮЛАШКИНЧЕН КАЛАНИ

Хӗрӳ ӗҫре ҫулсем иртеҫҫӗ хӑвӑрт:
Хӑватланать, чечекленет ҫӗршыв.
Анчах чунри ӗмӗтсене ҫеҫ тӑвӑр,
Вӗсем хистеҫҫӗ: малалла йӗр хыв.

Вӗсем хистеҫҫӗ: эс ҫӗршыв-аннешӗн
Ху вӑй-хална, юлташӑм, ан шелле.
Ҫак тӑнӑҫ пурнӑҫшӑн, сӳнми телейшӗн
Кӗрешӳре пул халӑхпа пӗрле.

Çавна пула эпир пĕрмай васкатпăр,
Хастар йышпа çĕклетпĕр хуласем.
Тырпул акатпăр, хура нефть уçлатпăр,
Сив космоса яратпăр карапсем.

Хĕрӳ ĕçре çулсем иртеççĕ шавлăн:
Каяççĕ «канăва» фронтовиксем.
Вĕсен çул-йĕрĕ пулнă пит мухтавлă,
Çакна асра тытасчĕ, çамрăксем.

Хĕвеллĕ пурнăçăн сӳнми тивлечĕ
Чĕнет малтан мала ĕлĕкхиллех,
Çĕр чăмăрĕн шăпишĕн, çут телейшĕн
Кĕрешӳре пул халăхпа пĕрле!

Умри пуласлăх питĕ илĕртӳллĕ,
Унта çитме вăй пух та çирĕп ут.
Этем пĕлтерĕшĕ пит аслă, çӳллĕ,
Эппин, эс хăв ятна ан çĕрт, ан сут!

Санпа манра нихçан ан чактăр тимлĕх,
Мире куллен-кун сыхласа хĕмлен.
Ун вăйĕ пулнă ĕмĕр-ĕмĕр симлĕ.
Кĕрешӳре пул халăхпа пĕрле!

Хĕрӳ ĕçре çулсем иртеççĕ чаплăн,
Тăмастпăр лăпланса пĕр вырăнта.
Чун-чĕрери вăй-хал хавшамĕ, чакмĕ,
Кашни утать тĕллев патне хастар.

Çĕршыв хăвачĕ çич юта хăраттăр,
Ушкăнпала вăрçа çĕнтермелле.
Çынна телейлĕ тутăр чăрсăр атом,
Кĕрешӳре пул халăхпа пĕрле!

***

Русь çĕрĕ... Улшăну чылай халь санăн.
Хĕвелĕн ылтăн хĕмĕпе çиçен.
Кашни çынна парасшăн çутă савнăç,
Вĕсем куллен телей çеç курччăр, тен.
Ирпе тул пуссипе утатпăр çăмăл
Итленĕ май тăрин шеп юррине.

Чĕре хăпартланать, ўсет сан кăмăл,
Умра куратăн пурнăç тĕллевне.
Раççей уй-хирĕсем пурне те тăнăç
Ялан, ялан пилленĕн туйăнать.
Тĕтресĕр ыр кунсемшĕн, миршĕн тăнăн,
Ăна хураллама шав чĕннĕн курăнать.
Каç ĕнтрĕкĕ çапать-и, çутă уйăх
Тухать-и тĕпсĕр тўпене ишсе,
Кирек хăçан та ырă пирĕн туйăм,—
Малашлăха çул тупчăр ĕмĕтсем!
Русь çĕрĕ... Улшăну чылай халь санăн,
Анчах та палăртасшăн эп çакна
(Ăна туйсамччĕ, çамрăк вулаканăм):
Умра — çул-йĕр пуçламăшĕ кăна,
Унччен çĕршыв-анне чылай шар курнă.
Хитран-ситрен çеç вăл тивлетлĕ пулнă,
Телей пĕрмай çупăрламан ăна.
Паян та çăмăл мар-ха. Çĕнĕ тапхăр
Тăван çĕре йĕркелĕ çĕнĕлле.
Йывăрлăхне те самаях туятпăр,
Тăшман хăш чух темле те элеклет.
Анчах... Çĕршывăм яланах çĕнтернĕ.
Умра вăл — тулăх, ирĕк самана.
Çĕр халăх туслăхĕ татах çĕкленĕ!
Хальхи вăл — çул пуçламăшĕ кăна.





## ТУПМАЛЛИ


Пирĕн тĕллев . . . . . . . . . . 3
Эпир — мир çыннисем . . . . —
Тăван ялта . . . . . 4
«Хĕвелĕн çутинчи çăлкуçĕ...» . . 6
Пионерсен юрри . . . . . —
Ыткăн-ыткăн, йĕлме йĕлтĕр . . 7
Çурхи кăмăл . . . . . . . —
Хĕвел ури . . . . . 8
Тинĕсе . . . . . . . . . —
«Август уйăхĕ тирпейлĕ...» . . 9
«Хумсем, пĕрне-пĕри тĕртсе...» . —
Йĕс шăнкрав кăна янратăр... . 10
«Çеçпĕл» кинофильмра . . . 13
Мул — эрнелĕх, ăс — яланлăх . . . 14
Çул пуçламăшĕ (поэма) . . . . . 22




45 пус

*Для младшего и среднего школьного возраста*

Николай Константинович Кушманов

ÇУЛ ПУÇЛАМĂШĔ

НАЧАЛО ДОРОГИ

Стихи, поэма

На чувашском языке

Редактор *В. П. Тимаков*
Художник *Н. С. Ананьев*
Художественный редактор *Г. А. Игнатьев*
Технические редакторы *Н. В. Васильева, Л. К. Егорова*
Корректор *Л. А. Иванова*

ИБ 2530

Сдано в набор 22.11.90.
Подписано к печати 27.08.91.
Формат 70×108[1]/16.
Бумага офсетная № 1.
Гарнитура школьная.
Печать офсетная.
Усл. печ. л. 3,5
Усл. кр.-отт. 15,4.
Учетно-изд. л. 1,91
Тираж 10000 экз.
Заказ № 3147
Изд. № 65.
Цена 45 коп.

Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской ССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли. 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

